

30-1
6С

Леонит Акаккăв

*

# «ВОЛОНЍЍОР» КОМУНĂН ПУРНĂÇĔ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. ящ. № 25.

Хакĕ 5 пус

Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕ
Шупашкар • • 1930 çул

*Леонит Акаккăв*

# «Волонт̆т̆ор» комунăн пурнăçĕ

## Малтанхи утăмсем.

Çинçе çĕлен пек авкаланса выртат̆ ђукун çул Хусантан Мускавалла. Çатма пек тикĕс, куçпа виçме çук сарлака уйхирсем урлă, киђемĕн кашласа ларакан сĕм вăрмансем витĕр тăсăлат̆ вăл...

Кулленех çак çул тăрăх пĕрин хыççăн тепри хурçă пăравуссем хашлатса, мĕкĕрсе, çĕре ђĕтрентерсе калле-малле ђупаççĕ.

... 1922-мĕш çулта, çурхи шывсем кĕрлесе иртсе кайсан, Вăрнарпа Çĕмĕрле стантсиййĕсем хушшинђи «Çарăкли» расйеса пĕрре темиçе çын пынă. Расйес патĕнђе кăштах тăркаласан, вĕсем таврари вырăнсене ђылайђђен пăхса, сăнаса çӳрене. Пĕр-пĕринпе канашланă, тавлашнă... Йулашкинђен пĕр вырăна паллă тунă та, «Çарăкли» расйес патĕнђен кайнă.

Камсем пулнăха вĕсем? Мĕн шыранă вĕсем? Акă мĕн...

Нурăс вулĕçтăвкомĕнђе ĕçлекенсем тĕрлĕ çĕртен пĕрле пурăнма килĕшекен çынсене пухса, йалхуçа-

лăх ертелĕ тума шут тытнă. Ҫăнах ĕнтĕ, вăл ҫулсенҫе ҫăваш ҫĕршывĕнҫе мар, пĕтĕм Совет Раҫҫейĕпе те ушкăнлă хуҫалăхсем сахал пулнă. Ертел, комун мĕн иккенне хресҫенсем нумайĕшĕ пĕлмен те. Ушкăнлă хуҫалăхсем тума вăл вăхăтра калама ҫук хĕн пулнă. Ҫапах та, Кăпиттонăв пуҫне ертел тăвас шухăш питĕ ҫирĕп кĕрсе ларнă. Ҫапла шухăшланă вăл:

— Ертел тумаллах. Ĕҫлемесен нимĕн те пулас ҫук. Ахаљрен мар пулĕҫке Совет влаҫĕ пĕрлешсе, ушкăнлă хуҫалăхсем туса пурăнма ҫĕнет... Ĕҫе хăрамасăр тытăнмалла!

Ертел тăвас ĕҫе пĕр февраљ уйăхĕсенҫе пуҫласа йарса, йурсем кайса пĕтнĕ тĕле вара тĕрлĕрен йалсенҫен 12 ҫемйе пухса йалхуҫалăх ертелĕ ҫăмăртанă. Унта вырăсĕ те, ҫăвашĕ те, ҫухăнĕ те, слушăшҫи те, пуйанни те пулнă. Тĕрлĕренех...

Ҫĕршыв типнĕ вăхăталла «Ҫарăкли» расйес патне кайса ертел ваљљи ҫĕр тĕллесе хурса, ҫĕр комиҫҫийĕ урлă илнĕ те, ĕҫе пурте пит хастар тытăннă. Ҫи малтан, «ҫĕнĕ ҫĕрте» ертел ҫленĕсем пĕр ватă, туратсемпе лупас пек саркаланса ларакан хурăн айне курăс хупписенҫен ўплесем туса пурăнма пуҫланă.

Кунĕ-кунĕпех ĕҫленĕ...

Ҫуртсем лартмалли вырăнсене тасатнă, ҫуртсем тума вăрмантан йăвăҫ турттарса хатĕрленĕ, т. ыт. те.

— Ертел пулатех! — тенĕ комунис Кăпиттонăв. Ђленсене тата вирлĕрех, хастарлăрах ĕçлеме пăлхатнă, ђленсемпе малалла мĕн-мĕн тăвасси çинђен сӳтсе йавнă...

Кĕркунне çывхарса килнĕ...

Ертел ĕнтĕ çуртсем вађђи вырăнсем те палăртса хунă, йăвăçсем те ђылайах хатĕрленĕ.

Çав вăхăтра — сасартăк, кĕтмен çĕртен, ертел ђленĕсем хушшинђе пăтрав тапранса кайнă... Унта ĕçрен упаран хăранă пек хăраканнисем те пулнă. Вĕсем пĕрле ĕçлесе аван пурнăç пулассине ĕненмен. Тепĕр йенђен — кахалланнă. Çавсем вара пур ђленсене те хăйсен майлă çавăрма тапратнă.

Шăпах, çав вăхăтрах тата, таврари йалсенђе çĕрйĕркелӳ пуçланса кайнă. Ертелри ђăхăмçă сынсем пушшех çухăрма тытăннă:

— Капла пурăнмалли çук!.. Пурпĕрех ырă пурăнăç кураймастпăр епĕр! Халех тăван йалсене саланмалла, килти çĕрсене туртса илсе пĕтерсен мĕн курас пирĕн? Пăрахас пулат ертел ĕçне, кунта епĕр выçса вилме çеç килтĕмĕр! — тенĕ.

Темĕн ђухлĕ ăнлантарнă ертеле йортçе пыракансем пăтранса кайнă ђленсене.

Çук, итлемен аташса кайнă ђленсем. Пĕрерĕникшерĕнех ертелрен кайалла тухса петнĕ. Ертелре вара иккĕн... Кăпиттонăв комунисла унăн шăлнĕ çеç тăрса йулнă...

Чувашская книжная палата
№ 25

Питĕ нумай шухăшланă вĕсем малалли ҫинҌен. Кайалла, йала, нимĕнпе те тавăрнас килмен. Пĕрлешӳллĕ пурнăҫ тăвассийех пулнă вĕсен шухăшĕсенҌе. ЙулашкинҌен вара ҫапла шут тытнă:

— Мĕн пулаť, мĕн килет... Кайалла пурпĕрех таврăнмастпăр. Малтанхи Ҍленсем тарса пĕтрĕҫ пулин те—ҫĕнĕрен те Ҍленсем пухма пулаť!

## Ҫĕнĕрен.

...Килĕшмен Кăпиттонăвсене малтан йышăннă вырăн. Тыpă-пулă тума та, выҌăхсене ҫӳретме те, килҫурт лартма та кансĕр пулнă вăл. Ҫавăнпа та ку вырăнтан урăх ҫĕре куҫма шут тытнă. АнҌах, майлă вырăн тупасси ҫăмăлах пулман. Ҍылай тăрăшма тивнĕ. Кайран вара, каллех ҫĕр пайĕ урлă ыйтса, Кӳлхĕррисен ҫĕрĕ ҫине вырнаҫнă та, текех вырăнтан хускалман. Кунта Кăпиттонăвсем хăйсене пурăнмалли пӳртсем туса лартса, ертел тума каллех тĕрлĕрен йалсенҌен Ҍленсем пухма пуҫланă.

...Майĕпенех ҫĕнĕрен Ҍленсем пухăнса пынă. АнҌах каллех пĕр пек халăх пулман. Инҫетри йалсенҌе палламан хресҌенсем, таҫти Улхаш вырăсĕсем, вăрман страшнĕкĕсем...

Кӳлхĕрри йалĕнҌи кулаксем ертел ҫине питĕ хытă тарăхса вăрҫма тытăннă. Питех те кăмăла кайман вĕсене ертел Ҍăмăртансах пыни. Акă мĕншĕн хирĕҫнĕ вĕсем: ертел пырса ларнă ҫĕр Кӳлхĕрри

йалӗнҫен ҫылай инçе. Ҫухӑнсем вӑл çӗр çине пырса тырпул тӑвайман, йаланах пуйансене тара парса пурӑннӑ. Пуйансемшӗн ку çӗр тутлӑ кулаҫ татӑкӗ пекех пулнӑ. Халҫ, авӑ, вӑл «тутлӑ татӑка» ертел çийет. Çавӑнпа та ертеле йертсе пыраканӗсене кулаксем:

— Çапса пӑрахатпӑр!—тесе хӑратма тытӑннӑ.

Ертел ӳссе, çирӗпленсе пынӑ...

Çуртсем лартнӑ, çӗр ӗçлемелли машшинсем, выҫӑх-ҫӗрлӗх туйаннӑ... Пӗр сӑмахпа—ертелӗн хуçалӑхӗ йерипен йӗркеленсех пынӑ.

## Каллех пӑтрану!

1926-мӗш çулҫҫенех ертел пурнӑçӗ тикӧс, йӗркеллӗ пынӑ. Ку çулта ертелте каллех пӑтрану тапранса кайнӑ.

...Ҫленсем, тӗрлӗ çӗртен пухӑннӑскерсем, пӗрпӗринпе килӗштермен, вырӑссем ҫӑвашсемпе хирӗçсе кайнӑ. Йулашкинҫен, пуху туса, ертеле пӗтерсе, харпӑр-çӗрлӗ саланма постановлени йышӑннӑ-лартнӑ. Анҫах ку постановленине ҫухӑнсем пурнӑçа кӗртме паман.

Пуринҫен ытла пӑтратаканнисем—ӗлӗкхи вӑхӑтра патша йыттисем (страшнӗксем-мӗнсем) пулнӑскерсем пулнӑ. Ертелре текех вӗсене усрама май килмен... Ҫӑнах, вӗсем нумайӑн пулман, анҫах пӗр кашӑк тикӗт пӗр витре сӗте йурӑхсӑра кӑларма

пултарат̆ теççĕ. Ертелти пур ђленсен пуххинђе çĕрĕпе, ирђђен шавланă хыççăн, çакăн пек йышăннă:

— Пăтратакансене пурне те ертелтен кăларса йарас. Çуртйĕрĕсене парас мар, ертелтех йулђђăр. Малалла та, пăтратакансем пулсан, çавнашкалах тăвас...

Ку йĕнтĕ питĕ çирĕп пулнă. Никама та каçару паман.

— Йĕркеллĕ, пĕрле пурăнас тетĕн пулсан — пурăн, пăтратакансем пире кирлĕ мар!

Ертелтен кăларса йанă ђленсем ертеле сута панă. Çуртйĕрсене калле пама ыйтнă, пулни çумне пулманнине, темтепĕр суйса тултарнă. Анђах сут ертеле айăпламан.

## Ун хыççăн...

Çакăнтан вара ертелĕн пурнăçĕ пĕтĕмпех йĕркеленсе çитнĕ. Çул çинђи тумхахсене пĕтерсе, ертел ђленĕсем ђăн-ђăнах пĕр шухăшлă пулса пурăнма тытăннă. Ертел уставне çирĕппĕн тытса пыма пуçланă. Хăйсен хуçалăхне йусас, вăйлатас тĕлĕшпе тăрăшсах ĕçленĕ. Ĕçлеме лайăх лашасем туйаннă.

Лашисем вара ђăнах та питĕ аванскерсем пулнă. Сăмахран, Нурăсра пулса иртнĕ йалхуçалăх выстăвккинђе ертелĕн пĕр «Йараплан» йатлă мăнă, курпунтарах кăвак лаши пĕђђен икĕ касăллă

плукпа хытса ларнă çереме сухаланă. Плукĕ çине акрономсем ларнă пулнă тата. Куншăн ертеле выстăвккăран мухтавлă хут, тата лашапа ĕçлемелли кĕрепле панă...

Вырăнти орканисатсисем те ертеле вăй çитнĕ таран пулăшу парса тăнă. 1929-мĕш çулхи май уйăхĕн 1-мĕшĕнђе «Волонттор» ертел — ертел уставне пăрахса, комун уставĕ çине куçнă...

## Халђхи вăхăтра...

«Волонттора» епĕр йулташпа кăçал, тырăсем вырас умĕн йурийех курма карăмăр. Ђылай илтеленĕђђĕ ун çинђен, хаçат-шурналсенђе те вулакаланăђђĕ.

...Шалти Пăртас йалĕнђен тухса кăшт кайсанах, умра çав тери хитре карттинсем курăнса карĕç. «Волонттор» патнерех çывхарсан, йулташ ђăтаймарĕ манăн:

— Е-ей, хитре вырăнсемçке кунта-а! тесе йађĕ.

...Лăпам вырăн. Виç йенђен вăрман. Сулахайра ђукун çул, сылтăмарахра, вăрман çумĕнђе «Волонтторăн» çурђĕсем йĕркеллĕн ларса тухнă та, айакран пит илемлĕн курăнса ларaççĕ...

Комуна çитсен епĕр акă мĕн куртăмăр.

Йĕри-тавра — комунăн тыррисем. Пĕтемпе сакăр тĕслĕ уй. Кунта акă кăвак тикĕс пек, сĕткенлĕ кле-

вĕр хумханса ларать. Йунашарах — пилĕкрен ç̆ӳллĕ сĕлĕ, унтан — виккă, пăрçа, çĕрулми, ыраш... Пурте калама çук лайăх. Хресђенсен уйĕсемпе пынă ђух епĕр ун пеккисене кураймарăмăр.

Хăйсен тыррисем пирки комунарсем пире кайран çапла каларĕç:

— Çĕр ĕçне епĕр акрономсем кăтартнă пек туса пыратпăр. Çĕре минерал çăнăхĕсемпе çемçететпĕр, ака-сухана вăхăтра тăватпăр, йаланах тасатнă вăрлăхпа акатпăр... Ун пек тумасан, паллах, тырăпулă нихăçан та аван пуласса кĕтме çук. Тăрăшса ĕçлемесен ма пулĕ вăл?

...Комунра халђхи вăхăтра пĕтĕмпе 25 çемйе — 72 йатак пурăнаççĕ. Вĕсенђен ĕçлеме пултараканнисем — 50 çын. Ђленсен шуђĕ 1922-мĕш çултанпа 1928-мĕш çулђђенех хутшăнса пынă. Пурăнмалли пӳртсем пĕтĕмпе вунвиççĕ, анђах хăшне-пĕрне çак çулсенђе пăсмалла, вĕсен вырăнне вара пысăк çуртсем тăваççĕ.

...Пирĕн тĕлĕнмеллисем çакăнтан пуçланса карĕç. Комун хушшипе пынă ђух темрен сулахайалла пăхрăм та... пĕр пысăк картара пĕр кĕтӳ шултра, мăнтăр, çĕнĕ уйăх пек тулли çилĕллĕ ĕнесем тăраççĕ.

— Хĕрĕх ĕне пирĕн, — терĕ пĕр комунар, — шатах «Краснокорпаттăвски» ăратă, 1928-мĕш çулта Ђулхула кĕпĕрнинђен илсе килнĕ... Пурнепе пĕрех

сӑватпӑр, иккӗш-виҫҫӗшне ҫеҫ, кӗҫ-вӗҫ пӑруламалла пирки, сума пӑрахрӑмӑр.

— Ӑҫта хуратӑр кун ђухлӗ сӗте? Хӑвӑрах ҫисе йараттӑри? — тесе ыйтма тапратрӑм епӗ.

— Сӗтне ваљђи вырӑн тупатпӑр, — терӗ комунар. — Ҫу савӑђӗ тӑватпӑрха вӗт. Пурӑнасса та епӗр ђукун ҫул хӗрринђе пурӑнатпӑр вӗт, — акӑ, «Ҫарӑкли» расйес йунашарах... Ђукун ҫулпа Ҫӗмӗрлери «Тупиттӗл» савӑтпа кӑмпината, тата Вӑрнар стантсинђи фосфорит савӑтне сӗт-ҫу таврашӗ темӗн ђухлӗ кирлӗ пулать. Ҫавна ваљђи хатӗрленетпӗр...

Пирӗн кӑна ырламалли ҫеҫ йулђӗ. Хамӑрӑн промышлӗннӑҫе хамӑрӑн колхоссем тӗрлӗренех апатҫимӗҫсем хатӗрлесе парсан пит те аван. Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл смыђкӑ тени...

— Пӑрусем нумай-иха? — ыйтатӑп епӗ каллех.

— Авӑ, пӑх... (комунар аллипе анаталла кӑтартрӗ).

Йӑл-л... кулса йатӑм еп.

Икӗ пӗђӗк хӗрађасем пӗр кӗтӳ пӗрешкел хӗрлӗ пӑрусене хӑваласа хӑпараҫҫӗ. Тађка илемлӗ. Ҫав тери кӑмӑллӑ, мурсем...

— Ӗҫ выљӑхӗсем йенђен мӗнле сирӗн пурӑнӑҫ? Ытти выљӑхсем ђылайи?

— Ӗҫ выљӑхӗсем ҫителӗклӗ. Лашасем вунтӑваттӑ, пӗр ӑйӑр—310 тенкӗ тӑраканскер. Ытти выљӑх-

сем: лайăх ăратлă сурăхсем 86, ђерккас ăратлă такасем 5, ăратлă вăкăрсем 2, сыснасем 35, ђыхасем 2, т. ыт. те.

— Машшинсем çителĕклĕ-и?

— И-и, машшинсем пирĕн, трактăрсăр пуçне, тĕслĕренех пур. Авăн çапмалли машшин—пĕрре, плуксем—çиђђĕ, тимĕр сÿресем—виннă, оккуђнĕк—пĕрре, тырă акмалли машшин—пĕрре, утă çулмалли—пĕрре, тырă вырмаллисем—иккĕ, сăвăрмалли—пĕрре, тасатмалли—пĕрре, трийĕр—пĕрре, клеверотторкка—пĕрре, улăм касмалли—пĕрре, тата темиçе çеппараттăр пур... Машшинсем тĕрлĕренех пуррипе, пур ĕçе те тенĕ пекех алăпа мар, машшинсемпе тăватпăр...

— Сирĕн çĕр мĕн ђухлĕха?

— Тырă-пулă акса тумалли çĕр пирĕн 100 кектар майлă çеç. Ытти—çаран, вăрман... Тăрлавлах мар. Çавăнпа епĕр выљăх-ђĕрлĕх усрас ĕçе малти вырăна лартатпăр, тырă-пулă çимеллĕх пулсан çитет... Унтан ытла тума май çук... Вĕлле хурђĕпе усă курмалла тăвасшăнха епĕр тата. Хаљ хĕрĕх вĕлле пур. Ирĕклĕ вăхăт пур ђух, кирек-ăçта кайса ĕçлеме те ÿркенместпĕр, хуçалăха усă пултăр!

...Ђылай çÿрерĕмĕр епĕр «Волонттор» комунĕнђе. Ађа сырăшне (йаçлĕне) кĕрсе куртăмăр, хĕрĕх ĕнен сĕт-турăхне çеппараттăрсемпе тирпейленине, çу савăђĕ тунине, т. ыт. те...

## „Волонтťор“ авани?

Малтанах каларăмăр: «Волонтťор» комун уставĕ çине куçни çулталăк та çукха. Унăн пурнăçĕ пĕтĕмпех комун йĕркине кĕрсех те çитеймен, хаљ çеç кунран кун йусанса, йĕркеленсе пыраť.

Çапах та, «Волонтťор» пурнăçĕ йалти хресђенсенђен нумай паха. Кĕскен каласан аванни акă мĕн:

— Ĕçсене пĕрлешсе ĕçлесе пынă пирки ĕçсем ăнăçлă пыраççĕ.

— Уй ĕçне нумай пусă йĕркипе туса пынипе, тупăш ђылай ытларах килет.

— Пур ĕçе те машшинсемпе тăваççĕ. Паллах, машшинпа ĕçлени алăпа ĕçленĕ пек мар. Ĕç çăмăл, хăвăрт, лайăх пулаť. Кăна пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ.

— Выљăх-ђĕрлĕх лайăх ăратлă. Вĕсем каллех вак выљăх пек мар, тупăш ытларах параççĕ.

Пĕтĕмпе 1929-мĕш çул хушшинђе «Волонтťор» ђленĕсем хăйсен пĕрлешӳллĕ хуçалăхĕнђен 11.098 тенкĕ те 94 пус таса тупăш илнĕ...

* * *

Йулашки вăхăтра «Волонтťор»-та тата пит пысăк ĕçсем тума тытăннă. 1929 çулта çуркунне тума тытăннă çу савăтне, Колхоссойус пулăшнипе, кĕркунне туса пĕтернĕ. Хаљ савăт çĕмĕрттерсех ĕçлет. Ку савăт малалла комунарсене пит аван тупăш

парса пырат̆ ĕнтĕ. Ĕнесем лайăх, савăта вађљи сĕт çителĕклĕ... Тата майпен пăрусем те ӳссе пыраççĕха савăт вађљи сырйо (ђĕрĕ тавар) пама...

Ĕç ăнат̆!

1929-мĕш çулђђен «Волонт̆т̆орăн» шкул пулман. Ађасене хутла вĕрентес йенђен пит кансĕр пулнă. Иртнĕ çуркунне комунарсем шкул вађљи уйрăм çурт туса лартнă. Çулла вăл çуртра пĕђĕк ађасем вађљи сырăш (йаçлĕ) тунă. Кĕркунне вара унта ађасене вĕрентме тытăннă.

Комунăн выљăхсем нумай терĕмĕр. Анђах вĕсене вађљи лайăх выљăх карти çукха. Хаљ акă комунарсем хăйсен выљăхĕсем вађљи пысăк, çутă, ăшă карта тума тытăннă. Çуркуннеђђен туса çитереççĕ. Çитес кĕртен комун выљăхĕсем хаљхи пек сивĕре тăмаççĕ ĕнтĕ...

...Апат-çимĕçе те комунра ку таранђђен уйрăм пĕçерсе çисе пурăннă. Ушкăнлă столовăй пулман. Ку питĕ кансĕр, мĕншĕн тесен кашни çемйерен хĕрарăмăнах урăх мĕн те пулин ĕçлес выранне—апат пĕçерсе ђăрманмалла. Малалла комунра ку йĕрке те пĕтет. Комунарсем ушкăнлă столовăй тума тытăннă. Ăна туса пĕтерсен вара комунра апат пĕçерессипи икв иç хĕрарăмăн ĕçĕ çеç пулат̆. Икviç хĕрарăм комунри пур çынсене те тăрантарма тытăнаççĕ. Ун выранне вара ытти хĕрарăмсем апат-çимĕç пĕçерес ĕçе пађах хутшăнма пăрахаççĕ...

Комунри çынсем халђ те кашни уйрăм ĕçсене туса пыраççĕ. (Сăмахран—пĕри ĕнесем сăват̆, тепри çу савăтĕнђе ĕçлет, виççĕмĕш тата мĕн те пулин...). Анђах халђ тума тытăнкă ĕçсене туса пĕтерсен ку йĕрке татах та çирĕпленет...

* * *

Комунăн хăйĕн пиплиоттĕк пур. Тĕрлĕренех кĕнекесем тупма пулат̆ унта. Паллах, пуринђен ытла йалхуçалăх çинђен çырнисем. Комунри çынсем пурте пекех хутла пĕлеççĕ, пĕлменнисем халђ вĕренеççĕ. Кăçалтан унта пĕр хут пĕлмен çын та йулмаст̆.

Комунра партти, комсомол йаđейккисем пур. Вĕсем пурне те политтĕк тĕлĕшпе вĕрентес ĕçе туса пыраççĕ. Ахалђ те, комунарсем пĕтĕм тĕнђере, Совет Сойусĕнђе мĕн-мĕн пулса иртнипе питĕ интересленеççĕ. Çавăнпа та комун тĕрлĕренех хаçатшурналсем çырăнса илсе тăрат̆. Вуласса йе каçхине шкулта, йе хăйсен хваттерĕсенђе вулаççĕ. Çитес кунсенђех тата ратио-прийомнĕк пулат̆, ăна лартма укçа та уйăрса хунă ĕнтĕ.

Хĕрарăмсен пурнăçĕ те йалти ђухнехи пек мар... Çулла, ĕç вăхăтĕнђе, ađа пăхас нуши çук. Ađасем шатах сырăшра пурăнаççĕ. Сĕт-турăх савăтра тирпейленет, столовăй туса çитерсен акă апат пĕçерес ĕç те пулмаст̆...

Пĕр сăмахпа, çакна каламалла йулашкинђен. Иртнĕ çулсенђи шăйрăксене пурĕ пĕрле тăрăшнипе

пӧтернӗ. Комун вӑйланат, тӗрекленет. Комунра ытарайми пурнӑç пулат...

Таврари йалсенђи хресђенсем те «Волонттор» çине пит лайӑх пӑхаççӗ ӗнтӗ. Комун таврари хресђенсемшӗн пит лайӑх пример...

## Пӗђђен пурӑнма йапӑх.

Хаљ кӑштах кайалла çавӑрӑнса пӑхарха. Ертел саланса кайма тапратнӑ ђух ертеле тепӗр хут ушкӑнламан, ђӑмӑртаман пулсан мӗн пулађђӗха? Калӑпӑр, пурте пӗрерӗн саланнӑ пулсан?

— Апла пулнӑ пулсан нимӗн те кураймасђӗç вӗсем...

Пӗрлешсе, тӑрӑшса, ушкӑнпа пӗр шухӑшлӑ пулса ӗçленипе çеç комунарсем хӑйсен пурнӑçне йусама пултарнӑ.

Уйӑрӑлса кайнӑ пулсан—кашниннех уйрӑм выљӑх карти, çу савӑђӗ, тӗрлӗрен машшинсем туйанмалла пулађђӗ. Анђах вӗсене кашни уйрӑм туйанма нихӑçан та вӑй çитес çук. Вӗсене пӗрлешсен çеç тума май пулнӑ, мӗншӗн тесен—ПӖРЛЕШЎРЕ—ВӐЙ!..

Кӑна хаљ пурте пӗлеççӗ ӗнтӗ. Иквиç çул ӗлӗкрех колхоссем (ушкӑнлӑ хуçалӑхсем) питӗ сахалђђӗ. Халӗ вӗсен шуђӗ кулленех ўссе пырат. Уйрӑм хуçалӑхсем çеç мар, йалӗ-йалӗпе, районӗ-районӗпе, окрӑкӗпе колхоса куçма тытӑнђӗç. Малтантарах

уçăлнă колхоссем вăйланса, çирĕпленсе пыраççĕ. «Волонт̆т̆ор» пек пĕђĕк колхоссем вырăнне «кикант» текен пысăк колхоссем ӳссе пыраççĕ. Вĕсене кура ытти хресђенсем те колхоса куçаççĕ. Колхоса куçакансене Совет влаçĕ вăй çитнĕ таран пулăшса тăрат̆, вĕсене тĕрлĕрен çăмăллăхсем парат̆.

Ĕнтĕ акă пур хресђенсем те колхоссем туса «Волонт̆т̆ор» пекех пурăнма тытăнаççĕ. Ун ђухне вара пурин те ушкăнлă столовăйсем, лайăх вылђăхђĕрлĕхсем, тĕрлĕрен савăтсем, лайăх йалхуçалăх машшинĕсем пулаççĕ. Кăçалах пурне трактăрсем килсе çитерме çук. Анђах трактăрсăрах та ĕç кĕрлесе пырат̆.

Пĕрик çултан акă пирĕн уйсенђе хыткан ула кĕсресем вырăнне хурçă ăйăр—трактăрсем—хашлатса çӳреме пуçлĕç. Унђђен хамăрăн мĕн пур пек ĕçхатĕрĕсене пĕрлешсе илес пулат̆. Вăл та пирĕн ĕçĕн ăнăçне тем пекех вăйлатат̆.

Колхоса патраксене, ђухăнсене, тата вăтамсене çеç илмелле. Пуйансене-кулаксене колхос сывăхне те йамалла мар. Кулак—колхоссен тăшманĕ. Вĕсем ĕçе пăсма тăрăшни «Волонт̆т̆ор» пурнăçĕнђе аван курăнђĕ. Колхоса кулак лексен—ĕç нихăçан та малалла кайас çук, вăл колхоса пĕтеретех. Кулаксене колхоса кĕртме мар, вĕсене клас пулса тăнипе пĕтерме тытăнтăмăр ĕнтĕ епĕр.

# ÇУРАКИ КАМППАНИ ТĔЛНЕ

çĕнĕрен çапăнса тухнă кĕнекесене

**ПУРТЕ, ПУРТЕ ИЛСЕ ВУЛАМА ВАСКАР!**

1. Пĕтĕм йалпа колхоса . . . . . . . . . . 7 пус.
2. **Пукров.** Контрактатси çинҫеп мĕн пĕлмелле? . . . . . . . . . . . 10 »
3. **Й. А. Йаккăвлĕв.** Ҫăн-ҫăнах ушкăнланса ĕçлессишĕн . . . . . . . . . . . 9 »
4. Йалхуçалăх ертелĕн примерлă Уставĕ . . 3 »
5. Йалхуçалăх комунĕсен примерлă Уставĕ 10 »
6. **Кирпиҫҫов.** «Хĕрлĕ Çăлтăр» йалпе контрактатси мĕн паҫĕ . . . . . . . . . . 7 »
7. Тырра машшинпа тасатса акăр.
8. Пионерсен çуракинҫи ĕçĕсем . . . . 7 »
9. **Кравҫҫенккă.** Хĕрарăмăн мĕншĕн колхоса каймалла . . . . . . . . . . . 10 »
10. **Акаккăв.** «Волонттор» комунăн пурнăçĕ
11. **Праттуç.** Трактăрсăр колхос тума пулатп? 3 »
12. **Калининпа Йенукитçĕ.** Советсен пайанхи ĕçĕсем.
13. **К. Никишшов.** Кролĕксене усраса ĕрҫетесси.

**Ку кĕнекесене илес пулсан, çак атреспа ыйтса илмелле:**
**ЧЕБОКСАРЫ, КНИЖНЫЙ МАГАЗИН „НОВАЯ КНИГА“**
**йе районри копператси лавккисенҫен илмелле.**

*Ҫăваш Кĕнеки Уйрăмĕ.*

ЧУВАШ[illegible]АЯ
КН[illegible]ЖНАЯ [illegible]ЛА[illegible]А
г. Чебоксары Чуваш[illegible]ой АССР
Абонем. ящ. [illegible] 25.

Цена 5 коп.

Л. Агаков. ЖИЗНЬ КОММУНЫ „ВОЛОНТЕР“.

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары

Чувашгиз № 312. Чебоксары, тип. шк. ФЗУ. Заказ № 406. Напеч. 10.000 экз.